27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944
ДЕКАБРЬ
8
ЭРНЕКУН
239(6734) №

# Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔНЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛАСОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

## Çамрăксем, пурте йĕлтĕр çине!

Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче физкультурăпа спортăн пĕлтерĕшĕ никăçанхинчен ытларах ÿсрĕ. Уйрăмăхах çамраксене çар специальноçне вĕренме май паракан спортпа ытларах интересленеççĕ. Çак майсенчен пĕри вăл — йĕлтĕр спорчĕ. Йĕлтĕр спорчĕ çыннăн сывлăхне çирĕплетет, хăвăрт тата тÿсĕмлĕ пулма пулăшать. Çак паха енсем пирĕн земляка Совет Союзĕн Геройне Мирон Ефимова лайăх летчик-штурмовик пулма май парĕç. Хĕрлĕ Çар ретĕнче кайиччен вăл чи лайăх физкультурник-йĕлтĕрçĕ пулнă.

Вăрçă вăхăтĕнче вăсĕ хăй хушшинче пирĕн спорт обществисем, профсоюзпа комсомол организацийĕсем Хĕрлĕ Çар валли миллионшар йĕлтĕрçĕсем вĕренсе хатĕрлесе пачĕç.

Кăçалхи хĕлле физкультурăпа комсомол тата профсоюз организацийĕсем умĕнче тата ответлăрах ĕçсем тăраççĕ. Вĕсен йĕлтĕрçĕсен йышне ÿстерессишĕн, йĕлтĕр спорчĕн пахалăхне лайăхлатассишĕн тăрăшса ĕçлемелле. Хĕрлĕ Çар ретĕнче пулма тивĕçлĕ çамрăксен пурин те 30 сехетлĕ программăна вĕренсе пĕтермелле. Иртнĕ çулта 20 сехетлĕ программăпа вĕренсе пĕтернĕ комсомолецсемпе çамрăксен пурин те 30 сехетлĕ программа тăрăх вĕренмелле.

Çак ĕçсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртни вăл Хĕрлĕ Çар валли йĕлтĕр çинче çапăçма пĕлекен лайăх боецсем хатĕрлес ĕçре пысăк пулăшу парать. Профсоюзпа комсомол тата физкультура организацийĕсен çамрăк йĕлтĕрçĕсен занятийĕсене вăрăма тăсмасăрах пуçăнмалла. Йĕлтĕрçĕсен подразделенийĕсене, отделенисемпе взводсене тумалла. Спорт обществисен йĕлтĕрпе çÿреме вĕренекенсене пулăшма инструкторсемпе командирсем уйăрмалла.

Республикăри «Буревестник», «Динамо», «Спартак» спорт обществисем йĕлтĕрçĕсен отделенийĕсемпе взвочĕсене тунă, йĕлтĕр базисене йĕркене кĕртнĕ. Малтанхи юр çусанах тренировкăллă занятисем ирттерме тытăннă. Çавăн пекех Елчĕк, Хĕрлĕ Чутай, Улатăр, Çĕрпÿ районĕсенчи физкультурăпа спорт организацийĕсем те йĕлтĕр базисене юсаса йĕркене кĕртнĕ.

Декабрь уйăхĕнче спортăн хĕллехи сезонĕ пуçланмалла. Анчах та Тăвай, Сĕнтĕр, Йĕпреç, Чкаловски, Канаш, Вăрнар, Чурачăк районĕсенче спорт сезонне кĕтсе илме начар хатĕрленеççĕ. Вĕсем паянхи куна çитсе те йĕлтĕр базисене йĕркене кĕртме тытăнман. Йĕлтĕрçĕсен хисепне те шута илмен. Кунти ВЛКСМ райкомĕсем çак ĕçпе пăрăнма тăрăшаççĕ. Район физкультура совечĕсен председателĕсем ку ĕçе пурнăçа кĕртме тăрăшмаççĕ. Сăмахран, Сĕнтĕрвăрри, Куславкка, Çĕмĕрле районĕсенче çак тараса çитсе те ку тĕлĕшпе ĕçлеме тытăнман.

Кăçал уйрăмах колхозсенче йĕлтĕр спортне анлăн сарасси, колхозсенчи физкультура коллективĕсене çирĕплетесси çине тимлĕн çаврăнса пăхмалла. Çакна пурнăçа кĕртес тесен, пысăк колхозсенче, машинăпа-тракторсен станцийĕсенче йĕлтĕр базисем туса хумалла. Колхозсене, районсене, машинăпа-трактор станцийĕсене массăллă йĕлтĕр спорчĕпе çывăхлатмалла, унтан тата республикăра йĕлтĕрçĕсен ăмăртăвĕсене ирттерсе, лайăх йĕлтĕрçĕсене палăртмалла. Ялсенче спорт ĕçне туса пырас енĕпе комсомолăн пуçламĕш организацийĕсем хĕрÿллĕн тăрăшмалла. Вĕсен ялти çамрăксене пурне те йĕлтĕрпе çÿреме вĕрентессишĕн кĕрешмелле.

Йĕлтĕрпе çÿреме вĕренмелли 20 тата 30 сехетлĕ программăсене вĕренсе пĕтернĕ хыççăн колхоз çамрăкĕсен массăллă ăмăртăвĕсем пуçланаççĕ. Кăçал та, иртнĕ çулхи пекех, профсоюзпа комсомолăн йĕлтĕрлĕ кросĕ пулать. Кунсăр пуçне, вăтам шкулсемпе аслă шкулсенче вĕренекенсен, всевобуч боецĕсен, ФЗО шкулĕсемпе чугун çул училищисенче вĕренекенсен ăмăртăвĕсем пулаççĕ, Шупашкар, Улатăр, Канаш, Çĕмĕрле, Етĕрне, Сĕнтĕрвăрри, Çĕрпÿ хулисенче кăçал малтанхи хут тăркăчăпа ярăнакансен тата хоккей ăмăртăвĕсем пулмалла. Районсенчи комсомол организацисен халех çак ăмăртусене хатĕрленме тытăнмалла. Комсомол организацисем юлашки çулсенче массăллă спорт мероприятийĕсене ирттерес тĕлĕшпе пысăк опытсем пухрĕç. Пулас ăмăртусенче çав опытсемпе анлăн усă курас пулать.

Халăха йĕлтĕрпе çÿреме вĕрентесси — оборонăллă пысăк ĕç. ВЛКСМ райкомĕсемпе пуçламĕш организацисен, физкультура работникĕсен хăйсене шанса панă ответлă ĕçе чыслăн пурнăçа кĕртессишĕн тимлĕн кĕрешмелле.

## Совет Информаци Бюровĕнчен

### ДЕКАБРĔН 4-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Венгрире, КАПОШВАР хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре, хĕвеланăçнерехре тата кăнтăртарахра, пирĕн çарсем наступлени туса пынă, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан 100 пункта ытла тытса илнĕ, çав шутра—ЭЛЕСАЛЛАШ, АЛЬШОСЕНТИВАН, ВАЙТА, ТОЛНАНЕМЕДИ, ПИНЦЕХЕЛЬ, ОЗОРА, НАДЬ СОКОЛИ, ФЕЛЬШЕНЬЕК, САБАДХИДВЕК, ШАГВАР, БАЛВАНЬОШ, ТЕНГЕД, МАДЬЯРКЕР, МЕРНЬЕ, ШОМОДЬ ФАЙС, ХЕТЕШ, МЕЗЕЧОКОНЬЯ, НАДЬБОМ, БЕЦЕФА, РОЖАФА, БАНФА, ШУМОНЬ, ГИЛЬВАНФА ятлă пысăк ялсем тата ВАЙТА, ПИНЦЕХЕЛЬ, ФЕЛЬШЕНЬЕК, МЕРНЬЕ, ШОМОДЯДОСТОПАН, ШУМОНЬ ятлă чугун çул станцийĕсем.

Декабрĕн 1-мĕшĕпе 3-мĕшĕ хушшинче Венгрире УКРАИНĂРИ 3-мĕш фронт çарĕсем нимĕçсемпе венгерсен 3.000 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ.

Югославире ДУНАЙ шывĕпе САВА шывĕ хушшинче Югослави халăхĕн ирĕклĕх çарĕн чаçĕсем, пирĕн çарсемпе пĕрле кĕрешсе, МИТРОВИЦА хулипе чугун çул станцине тытса илнĕ, çавăн пекех тата НЕШТИН, ВИЗИЧ, ЛЕЖИМИР, ДИВОШ, МОНДЕЛОС, ЧАЛМА, ЛАЧАРАК ятлă ялсене йышăннă.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çÿренĕ тата чылай пунктсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

### ДЕКАБРĔН 5-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Декабрĕн 5-мĕшĕнче пирĕн çарсем Венгрире БАЛАТОН (ПЛАТТЕН) хулипе ДРАВА шывĕ хушшинче çаплах наступлени туса пынă, СИГЕТВАР хулипе чугун çул узелне туртса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 120 пункта ытла йышăннă, вăл шутра—ЗАМАРДИ, ФЕЛЬДВАР, БАЛАТОНБОЛГАР, БАЛАТОН ЧЕХИ, СЕЛЛЕШДЬЕРЕН, ШОМОДВАР, ЕРЕГЛАК, БОРОНКА, МАРЦАЛИ, ЛИБИЦКОЗМА, ПАТА МЕРЕНЬЕ, МОЛЬВАНЬ, ДЕНЧХАЗА, ПОТОНЬ, ЛАКОЧА, ДРАВАФОК, ФЕЛЬШЕ СЕНТ МАРТОН, ДРАВА СТАРА, ШЕЛЛИЕ, ЗАЛАТА ятлă пысăк ялсем тата САНТОД, БАЛАТОНБОЛГАР, БУЖАКИ, ЕРЕГЛАК, КИШ КОРПАД, НАДЬ ШАРИ, ШЕЛЛИЕ, ФЕЧЕК чугун çул станцийĕсем.

Югославире ДУНАЙ шывĕпе САВА шывĕ хушшинче Югослави халăхĕн ирĕклĕх çарĕн чаçĕсем, пирĕн çарсемпе пĕрле кĕрешсе, ЙЛОК, НОВАК БАРСКА, СОТ, БЕРКАСОВО, ЕРДЕВИК, БИНКУЛА, МАРТИНЦИ ялĕсене тата МАРТИНЦИ чугун çул станцине тытса илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çÿренĕ тата чылай пунктсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Декабрĕн 4-мĕшĕнче пирĕн çарсем нимĕçсен 14 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 6 самолетне персе ÿкернĕ.

### ДЕКАБРĔН 6-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Декабрĕн 6-мĕшĕнче пирĕн çарсем Венгрире БАЛАТОН кÿллипе ДУНАЙ шывĕ хушшинче çаплах малалла наступлени туса пынă, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан 50 пункта ытла туртса илнĕ, вăл шутра — ДУНАПЕНТЕЛЕ, РАЦАЛМАШ, ХЕРЦЕГФАЛЬВА, АЛАП, ЦЕЦЕ, ШАР ЕГРЕШ; ШИМОНТОРНИЯ, ШАРБОГРАД, СИВАШ-БАЛХАШ, ЛАЙХОШ-КОМАРОМ, АДАНД, БАЛАТОНСАБАДИ ятлă пысăк ялсем тата ДУНАПЕНТЕЛЕ, НАДИВЕНИЕМ, ХЕРЦЕГФАЛЬВА, ШИМОНТОРНИА, ШАРБОГРАД, МЕЗЕ-КОМАРОМ ятлă чугун çул станцийĕсем. Çавăнпа пĕр вăхăтрах пирĕн БАЛАТОН кÿллипе ДРАВА шывĕ хушшинче наступлени туса пыракан çарсем халăх пурăнакан 40 пункта ытла туртса илнĕ, вăл шутра—ФОНЬОД, КЕРЕФТУР, БЕРЕНЬ, БАЛАТОН-УЙЛАК, КЕТЕЛЬ, МЕСТЕНГЕ, СЕНРА, СЕЛИЦ КИШФАЛУД, ПАТОШ-ХОМОК-СЕНТ-ДЬЕРДЬ, КАЛМАНЧА, ИСТВАНДИ ДАРАНЬ, ДРАВА-ТАМАШИ ятлă пысăк ялсем тата ФОНЬОД, КЕРЕСТУР, КЕТЕЛЬ, ДЬЕТАПУСТА, СЕНТ ИМРЕ, НАДЬ-УЙФАЛУ, КОШТЕЛЬЕШ ДОМБО, ДАРАНЬ ятлă чугун çул станцийĕсем пур.

Декабрĕн 3-мĕшĕпе 4-мĕшĕнче пулса иртнĕ çапăçусенче УКРАИНĂРИ 3-мĕш фронт çарĕсем Венгрире нимĕçсемпе венгерсен 2.375 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ.

Югославире ДУНАЙ шывĕпе САВА шывĕ хушшинче Югослави халăхĕн ирĕклĕх çарĕн чаçĕсем, пирĕн çарсемпе пĕрле кĕрешсе, ПШИД хулипе чугун çул станцине туртса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, ШАРЕНГРАД МОХОВО, ОПАТОВАЦ, ЛОВАС, МАЛАЯ ВАШИЦА, ГИБАРЕЦ, БАЧИНЦЫ, КУКУЕВЦЫ, КУЗЬМИН, АДАШЕВЦЫ, МОРОВИЧ ялĕсене тата АДАШЕВЦЫ, МОРОВИЧ, БАЧИНЦЫ, КУКУЕВЦЫ, ЕРГЕЛИК ятлă чугун çул станцийĕсене йышăннă.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çÿренĕ тата чылай пунктсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Декабрĕн 5-мĕшĕнче пирĕн çарсем нимĕçсен 21 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 15 самолетне персе ÿкернĕ.

## И. В. Сталин Франци Правительствин Пуçлăхĕпе де Голль генералпа калаçни

Декабрĕн 6-мĕшĕнче СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. В. Сталин Франци Республикин Вăхăтлăх Правительствин Председателĕпе де Голль генералпа калаçнă.

Калаçура çаксем пулнă: СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов, Совет Союзĕн Францири Посолĕ А. Е. Богомолов, Франци Республикин Вăхăтлăх Правительствин Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ Ж. Бидо господин, Франци Республикин Вăхăтлăх Правительствин Совет Союзĕнчи представителĕ Р. Гарро господин тата Францин Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министерствин Политика Департаменчĕн Директорĕ М. Дежан господин.

## Польша Халăхĕ Ирĕклĕх Комитечĕн представителĕсем Мускава килни

Декабрĕн 6-мĕшĕнче Мускава Польша Халăх Совечĕн Председателĕ Берут господин, Польша Халăхĕн Ирĕклĕх Комитечĕн Председателĕ Осубка-Моравский господин, Роля-Жимерский генерал-полковник килнĕ. Вĕсене вокзалта Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕ В. Г. Деканозов, Наркоминделăн тата Оборона Халăх Комиссарначĕн ответлă сотрудникĕсем, çавăн пекех тата Польша Халăхĕн Ирĕклĕх Комитечĕн Совет Правительстви çумĕнчи представителĕн ĕçĕсене туса тăракан Ендриховский хирĕç тухса кĕтсе илнĕ.

### СОВЕТ ГРАЖДАНĔСЕМ РУМЫНИРЕН СОВЕТ СОЮЗНЕ ТАВРĂНАÇÇĔ

КИШИНЕВ, декабрĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Совет Союзĕн пĕр пайне оккупациленĕ вăхăтра ирĕксĕр куçарса кайнă совет гражданĕсем 8 пин çынна яхăн халь Румынирен Кишинева таврăннă. Совет Молдавин столицине таврăннă граждансем хушшинче врачсем, учительсем, инженерсем нумай. Халĕ çав ирĕке кăларнă совет гражданĕсем хăйсен тăван хулисемпе ялĕсене саланаççĕ.

### С. М. КИРОВ СТАТЬИСЕМПЕ САМАХĔСЕНЕ ПИЧЕТЛЕСЕ КĂЛАРНИ

Политикăллă литература кăларакан государство издательстви С. М. Киров вилни 10 çул тултарнă тĕле унăн суйласа илнĕ статьисемпе сăмахĕсене уйрăм кĕнеке туса пичетлесе кăларнă. Çав кĕнекене С. М. Кировăн пурте пĕлсе тăракан хĕрÿллĕ сăмахĕсемпе пĕрле унăн хальхи вăхăтра сахал çын пĕлекен сăмахĕсемпе статьисене те, совет влаçĕ çуралса çирĕпленсе пынă вăхăтра çырнăскерсене тата каланăскерсене, кĕртнĕ.

Сборник Кировăн 1918 çулхи мартăн 12-мĕшĕнче (февралĕн 27-мĕшĕнче) февральти революци çулталăк тултарнă ятпа пулнă демонстрацире каланă сăмахĕпе пуçланать. Çав сăмаха С. М. Киров Терски область Совет Российипе пĕрлешнĕ вăхăтра каланă.

Кировăн 1920 çулта В. И. Ленин патне янă виçĕ çырăвĕ питĕ интереслă. Çав çырусене вăл Грузири меньшевикла правительствăпа мирлĕ договор тунă хыççăн РСФСР-ăн Грузири полномочнăй представителĕ пулса ĕçленĕ вăхăтра çырнă.

Киров Ленинпа Сталин партийĕн пĕрлĕхне çирĕплетессишĕн пĕр чарăнмасăр кĕрешнине унăн çак сăмахĕсем кăтартса параççĕ: 1926 çулхи февралĕн 12-мĕшĕнче Ленинградри 23-мĕш чрезвычайнăй партконференцире каланă сăмах, 1927 çулхи январĕн 27-мĕшĕнче Ленинград кĕпĕрнинчи 24-мĕш партконференцире ВКП(б) Ленинград губкомĕн ĕçĕсем çинчен тунă доклад, ВКП(б)-н 15-мĕш съездĕнче парти тăшманĕсене хирĕç çав тери вăйлă, пĕтĕм чун хавалĕпе, парти тăшманĕсене тăрăхласа тата çиленсе каланă сăмах, çак сăмаха çапла ят панă: «Ура айĕнче йăваланса выртакан япаласене пурне те сирсе ывăтмалла, пирĕнпе сирĕн пĕр çул çеç—малалла, çĕнтерÿсем патнелле».

Киров сборникĕ пирĕн партин историне вĕреннĕ чухне тата сталинла пятилеткăсене пурнăçа кĕртнине пула промышленноçпа ялхуçалăхĕнче пулнă питĕ пысăк улшăнусене вĕреннĕ чухне усă курмалли паха кĕнеке пулса тăрать.

Сборнике лайăх пичетлесе кăларнă. Унта С. М. Киров ĕçленĕ вăхăтра тĕрлĕ тапхăрсенче ÿкерсе илнĕ ÿкерчĕксене тата Бродский, Соколов-Скаль, Кочергин художниксем ÿкернĕ портретсемпе картинăсене пичетленĕ.

Кĕнекене 15.000 экземпляр пичетлесе кăларнă. (ТАСС).

### ТУРГЕНЕВ ПĂШАЛĔ

Орел хулинчи И. С. Тургенев музейĕ «Записки охотника» çырнă И. С. Тургеневăн пăшалне илнĕ. Юлашки вăхăтра вăл пăшал Рязань облаçĕнче пурăнакан Орлов учитель аллинче пулнă. Орлов нумаях пулмасть вилнĕ. Унăн арăмĕ вара çав пăшала музее панă.

И. С. Тургеневăн пăшалĕ сыхланса юлнă. Халĕ ăна тар хумалли те фляжкăпа пĕрле музейре писателĕн килти ытти япалисем патне вырнаçтарса лартнă. (ТАСС).

## Кашни гектартан 25-шер центнер тĕштырă туса илессишĕн ăмăртăва тухатпăр

### Чăваш республикинчи Вăрнар районĕнчи ЛЕНИН орденлĕ Сталин ячĕпе тăракан колхоз председательне А. Д. ВАСЯНИН юлташа

### Мускав облаçĕнчи Дмитровски районри ЛЕНИН орденлĕ „Победа" колхоз председательне И. С. ЕГОРОВ юлташа

Нумаях пулмасть, эпир «Социалистическое земледелие» хаçатра 1944 çулта икĕ колхоз пысăк тухăçлă тырпул туса илессишĕн ăмăртса ĕçленин итогĕсемпе паллашрăмăр. Çавăн хыççăн сирĕн пата çак уçă çырăва çырма йышăнтăмăр.

Тĕрĕслев комиссийĕсем çырнă акт тăрăх, сирĕн артельсенчи колхозниксемпе колхозницăсем ывăнма пĕлмесĕр ĕçлени тата тăшмана аркатса тăкассишĕн нумай ĕç туни курăнать. Ăна эсир пысăк тухăçлă тырпул, çĕрулми тата пахча-çимĕçсем пухса илни те лайăх çирĕплетсе парать.

Эпир те фронта тивĕçлипе пулăшатпăр тесе калама пултаратпăр. 227 гектар çĕр çинчен эпир вăтам шутпа кашни гектартан 23 центнер тĕштырă пухса илтĕмĕр. Кăçал пĕр çул хушшинче кăна пирĕн колхоз çĕршыва 11.500 пăт тырă, 9.500 пăт çĕрулмипе пахча-çимĕç пачĕ, сĕт, аш-какай, çăм, çăмарта тата ялхуçалăхĕн ытти продукчĕсене те нумай пачĕ.

Пирĕн Прудовкăри «Советская деревня» колхоз пысăк тухăçлă тырпул туса илнипе чапа тухрĕ. Пирĕн колхоз Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин участникĕ пулнă. 1940 çулта СССР Верховный Совет Президиумĕ пирĕн колхоза Ленин орденĕ парса наградăларĕ, Горький облаçĕнчи организацисем Хисеп хăми çине кĕртрĕç. Вăрçă çулĕсенче, йывăрлăхсене çĕнтерсе, эпир тата та лайăхрах ĕçлеме вĕрентĕмĕр, пысăк тухăçлă тырпул туса илсе, государствăна ытларах продуктсем патăмăр.

«Социалистическое земледелие» хаçатăн çав номерĕнче эпир 1945 çул валли эсир çырнă социализмлă ăмăртăвăн договорне вуларăмăр. Эсир паха ĕç пуçарнă, ăмăртăва малалла тăсни питĕ тĕрĕс. Эпир те çак ăмăртăва хутшăнма йышăнтăмăр.

1945 çулта ялхуçалăх продукчĕсем туса илес тĕлĕшпе эпир хамăр çине çакăн пек обязательство илтĕмĕр:

1. Тĕштырă акмалли çĕр çинче (227 гектар) кашни гектартан 25 центнертан кая мар тырă туса илмелле.

2. 53 гектар çĕрулми лартса, кашни гектартан 200 центнер туса илмелле.

3. 8 гектар купăста лартса, кашни гектартан 500 центнер туса илмелле.

Пирĕн çĕршывра çулран çул пысăк тухăçлă тырпул пухса илекен колхозсем нумай. Эпир «Социалистическое земледелие» хаçат урлă 1945 çулта кашни гектартан 25-шер центнер тĕштырă туса илессишĕн ăмăрту пуçласа яма сĕнетпĕр.

Юлташсем, çав ăмăртура мала тухассишĕн кĕрешер!

**Ленин орденлĕ «Советская деревня» колхоз председателĕ И. В. СОЧКОВ.**
**Бригадирсем: Е. И. ДЕМИНА, Т. С. ЗИМИНА,**
**Звеньевойсем: К. П. БИРИНА, А. В. ФРОЛОВА, А. И. ЩЕННИКОВА, Е. В. БИРИНА,**
**Богородски район, Горький облаçĕ.**

## Çуракине хатĕрленеççĕ

Октябрьски районри Киров ячĕпе тăракан колхоз çитес çулхи çуракине хатĕрленме тытăнчĕ. Халĕ кунта вăрлăхсем сортлаççĕ, ялхуçалăх машинисене юсаççĕ. Колхоз тимĕрçи И. Сотников ĕçе пысăк тимлĕхпе туса пырать. Кунсăр пуçне колхозра уя тислĕк кăларас тата кĕл пухас ĕçе те организациленĕ. Паянхи куна 100 лав тислĕк кăларнă. Ку ĕçре И. Миляковпа П. Герасимов юлташсем тăрăшса ĕçлеççĕ.

**Г. ЮРКОВ,**
**Ялсовет исполкомĕн председателĕ.**

## Тракторсене юсама подшипниксем çук

Сĕнтĕр МТС-ĕ тракторсене юсас ĕçе иртнĕ çулхисенчен организованнăрах тытăнчĕ. Паянхи куна 6 трактор юсаса пĕтернĕ. Анчах та, çак ĕçе хăвăртрах тăвас тесен, Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕпе «Тракторосбыт» контори енчен лайăхрах пулăшни кирлĕ. МТС-ра 12 трактор салатса пăрахнă, вĕсене юсама подшипниксем кирлĕ. Кун çинчен МТС директорĕ Çĕрĕç Халăх Комиссариатне те, «Тракторосбыт» конторин управляющине Марков юлташа та пĕлтернĕ. Вĕсем шавах пулăшма сăмах парса лăплантарнă. 4-мĕш квартал вĕçленет, подшипниксем çук пирки тракторсене юсасси чарăнса тăрать. МТС директорĕ Чупраков юлташ подшипник шырама хăйĕн представительне Хусана янă. Ыйтас килет: çак ĕçе тума ятарласа организациленĕ «Тракторосбыт» контори мĕн тăвать-ха?

Районри организацисем енчен те пулăшу çителĕксĕр-ха. Райсовет исполкомĕ, трактористсене ĕçлеме пур условисене те туса парас вырăнне, вĕсен общежитине ытти организацисене илсе парать, трактористсен пĕр пайĕ общежитисĕр юлать.

**В. БУЛАЕВ.**

## Совет Союзĕн Геройĕ Н. И. Паршин тăван ялĕнче

ПАРАЧКАВ, декабрĕн 7-мĕшĕ. (Телефонпа). Вознесенски ялсоветĕнчи «Борьба за социализм» колхоза малтан çак колхоз членĕ пулнă, халĕ Совет Союзĕн Геройĕ лейтенант Николай Иванович Паршин килнĕ.

Ялти çынсем мухтавлă земляка ăшшăн кĕтсе илнĕ. Герой колхозниксене Хĕрлĕ Çар воинĕсен паттăр ĕçĕсем çинчен каласа панă.

Николай Иванович Паршин 1923 çулта çуралнă. 1942 çулччен вăл ялти шкулта вĕреннĕ тата колхозра ĕçленĕ. Унăн ашшĕ—Отечественнăй вăрçă участникĕ. Ăна «За боевые заслуги» медальпе наградăланă. Каярахпа вăл, нимĕç захватчикĕсене хирĕç çапăçса, Ржев патĕнче вилнĕ. Паршин юлташ ашшĕ вилĕмĕшĕн нимĕçсене кирлĕ таранах тавăрать. Çапăçусенче вăл вуншар нимĕçе пĕтерсе тăкнă. Днестр шывĕ урлă каçнă чухне паттăрлăх кăтартнăшăн СССР Верховный Совет Президиумĕн 1944 çулхи сентябрĕн 13-мĕшĕнче кăларнă Указĕ тăрăх ăна Совет Союз Геройĕн ятне панă. Ун хыççăнхи çапăçусенче хастарлăх кăтартнăшăн командовани ăна «Хĕрлĕ Çăлтăр» орденĕпе наградăланă.

Паршин юлташ хăйĕн тăван колхозĕнче темиçе кун хушши пулать.

### ЧУГУН ÇУЛ ВАЛЛИ ВУТА ХАТĔРЛЕСЕ ТУРТТАРМАЛЛИ 1944 ÇУЛХИ IV-МĔШ КВАРТАЛТИ ПЛАНА ДЕКАБРĔН 5-МĔШĔ ТĔЛНЕ МĔН ЧУХЛĔ ТУЛТАРНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА

| Районсем | Плана тултарнă (процентпа): Турттарас енĕпе | Плана тултарнă (процентпа): Хатĕрлес енĕпе | Мĕнле вырăн йышăнать: Турттарас енĕпе | Мĕнле вырăн йышăнать: Хатĕрлес енĕпе |
|---|---|---|---|---|
| Куславкка | 104,4 | 116,8 | 1 | 1 |
| Йĕпреç | 101,6 | 77,4 | 2 | 9 |
| Октябрьски | 97,0 | 96,1 | 3 | 3 |
| Шупашкар | 96,8 | 104,2 | 4 | 2 |
| Первомайски | 86,3 | 66,5 | 5 | 14 |
| Чурачăк | 81,8 | 71,2 | 6 | 13 |
| Шăхасан | 78,7 | 76 6 | 7 | 11 |
| Вăрнар | 77,9 | 60,9 | 8 | 18 |
| Сĕнтĕрвăрри | 74,0 | 81,0 | 9 | 7 |
| Комсомольски | 73,2 | 64,2 | 10 | 16 |
| Пăрачкав | 67 0 | 94,6 | 11 | 4 |
| Красноармейски | 65,5 | 79,2 | 12 | 8 |
| Вăрмар | 64,2 | 40,3 | 13 | 24 |
| Хĕрлĕ Чутай | 63,6 | 77,2 | 14 | 10 |
| Калинино | 59,0 | 47,7 | 15 | 12 |
| Советски | 58,2 | 55,3 | 16 | 20 |
| Канаш | 57,6 | 37,7 | 17 | 25 |
| Елчĕк | 57,7 | 57,0 | 18 | 19 |
| Муркаш | 54,6 | 47,7 | 19 | 22 |
| Етĕрне | 54,4 | 50,5 | 20 | 21 |
| Чкаловски | 51,0 | 85,1 | 21 | 5 |
| Тăвай | 47,5 | 46,4 | 22 | 23 |
| Çĕмĕрле | 46 8 | 84,8 | 22 | 6 |
| Элĕк | 46,4 | 32,3 | 24 | 27 |
| Ишлей | 45,6 | 35,3 | 25 | 26 |
| Çĕрпÿ | 43,4 | 65,8 | 26 | 15 |
| Кувакино | 43 0 | 61,5 | 27 | 17 |
| Сĕнтĕр | 36,8 | 31,7 | 28 | 28 |

### Финанс планне тултарса çитермелли уйăхлăх

## Хăвăртлăхсене татăклăнах ÿстерни кирлĕ

Тăваттăмĕш кварталта укçа-тенкĕ пухмалли плана декабрĕн 1-мĕшĕ тĕлне тупăшсенчен илекен налогсем енĕпе 68,5 процент, налогсемпе тÿлевсем енĕпе 55,0 процент, государство страховани енĕпе 41,9 процент тата перекет кассисем 42,9 процент тултарнă.

Асăннă цифрăсем çакна кăтартаççĕ: финанс планне тултарасси тупăшсенчен илекен налогсене пухас тĕлĕшпе кăна ăнăçлăн пырать. Анчах, чăннипе илсен, çакна спирт завочĕн продукцине планран ирттерсе сутнипе çеç тунă. Промышленноçăн ытти отраслĕсене илсен вара, вĕсем пĕри те плана пурнăçа кĕртмен. Çапла, тупăшсенчен илекен налогсене пухмалли плана табак промышленноçĕ 61,5 процент, Маслопром 49,8 процент, Сăра завочĕ 38,6 процент, тир-сăран промышленноçĕ 39,4 процент, промкооперации 36,6 процент, пир-авăр промышленноçĕ 43,5 процент çеç тултарнă. Государство тупăшĕсен планне пурнăçлас ĕçе Канаш, Йĕпреç, Комсомольски, Кувакино, Первомайски, Чкаловски, Елчĕк, Тăвай районĕсенче тата Шупашкар хулинче начар организациленĕ. Асăннă предприятисемпе хуçалăх органĕсем тата районсем сÿрĕк ĕçлени пĕтĕм плана тултарма чăрмантарать. Çакна ăнланса илес пулать: тупăшсенчен илекен налогсем государство бюджетне пурнăçлас ĕçре паллă вырăн йышăнса тăраççĕ. Çавăнпа та вăл налогсене вăхăтра пухасси хуçалăх руководителĕсен кулленхи тивĕçĕ пулса тăрать.

Халăхран укçа-тенкĕ пухмалли тăваттăмĕш кварталти плана тултарса çитерме пирĕн 69.780 пин тенкĕ пухмалла. Иртнĕ икĕ уйăх хушшинче пĕтĕмпе те 38.371,5 пин тенкĕ çеç пухнă. Ку плана 55 процент тултарнине пĕлтерет. Чылай районсенчи партипе совет организацийĕсем, финанс работникĕсем уйăхлăха хутшăннăранпа лайăхрах ĕçлеме пуçларĕç. Налогсемпе тĕрлĕ тÿлевсен укçине пухмалли плана декабрĕн 1-мĕшĕ тĕлне Советски район 77,2 процент, Октябрьски район 85,3 процент, Тăвай районĕ 84,6 процент, Муркаш районĕ 78,8 процент тултарнă. Куславкка, Чурачăк, Вăрмар районĕсем тата Шупашкар хули те кая юлмаççĕ. Асăннă районсенче уйăхлăх пуçламĕшĕнчех ВКП(б) Обкомĕ лартнă задачăсене пурнăçлассишĕн тимлĕн кĕрешме тытăннă. Вăйсене тĕрĕс вырнаçтарса тухнă, массăллă-ăнлантарулла ĕçе кирлĕ пек йĕркеленĕ, налог агенчĕсемпе ялсоветсен ĕçне тăтăшах тĕрĕслесе тăраççĕ.

Çав вăхăтрах хăшпĕр районсем ку тарана çитсе те уйăхлăха тивĕçлипе хутшăнманха. Чкаловски, Çĕмĕрле, Пăрачкав, Хĕрлĕ Чутай, Канаш тата ытти хăшпĕр районсем ноябрĕн юлашки çур уйăхĕнче пурĕ те 10 процент кăна ÿсĕм панă. Асăннă районсен, плана вăхăтра тултарас тесен, кашни 5 кун хушшинче 10 процент чухлĕ ÿсĕм тумалла. Çак районсенче ĕçсем начар пыни, тĕпрен илсен, укçа-тенкĕ пухассине процент, Шупашкар районĕ 75,5 процент организацилеме пĕлменнинчен е тата хакламаннинчен килет. Йĕпреç районĕнче уйăхлăхăн пирвайхи пилĕк кунĕнче «уполномоченнăсем ярас е ярас мар» тесе шутласа ларнă, юлашкинчен вара ялсемпе колхозсене пĕр çын та яман. Районра халĕ плана тултарасси хăрушлăх умĕнче тăрать. Сĕнтĕр районĕнчи руководительсем ялсене кайнă уполномоченнăйсене панă заданисенче финанс уйăхлăхĕ çинчен нимĕн те асăнман. Вăл районсенче финанс работникĕсем те çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Налог агенчĕсен ĕç графикĕсем çук. Районри финанс отделĕ тата инспекторсем вĕсен ĕçне тĕрĕслемеççĕ.

Кая юлса пыракан районсенче те лайăх ĕçлекен финанс агенчĕсемпе ялсовет председателĕсем пур. Чăваш АССР Совнаркомĕ вĕсене укçа парса премилерĕ. Анчах та финанс отделĕсен, перекет кассисен заведующийĕсем вĕсене çийĕнчех палăртмаççĕ, вĕсен опытне сармаççĕ.

Первомайски, Тăвай, Советски, Куславкка, Калинино районĕсенче страховка укçине пухасси начар пырать.

Республикăри перекет кассисем те çителĕксĕр ĕçлеççĕ-ха. Государство заемĕсен укçине пухасси юлса пырать. Ку тĕлĕшпе Улатăр, Элĕк, Вăрнар, Йĕпреç, Канаш тата ытти районсем уйрăмах юлса пыраççĕ. Перекет кассисене вкладсем пухасси хăшпĕр районсенче чакни палăрать. Ятарласа хывакан вкладсен планне тултарасси питех те начар пырать. Элĕк, Улатăр, Вăрнар, Йĕпреç, Калинино тата ытти чылай районсенче укçапа япаласен лотерейин укçине пухассине вăраха хăварса пыраççĕ.

Чăваш АССР Верховный Совечĕн VIII-мĕш сессийĕ, Финанс Халăх Комиссариачĕпе унăн вырăнти органĕсен ĕçне, çавăн пекех тата вырăнти советсен ĕçне хытă критиклесе, финанс планне вăхăтра тултарма татăклă мерăсем йышăнма хушса хăварчĕ. Сесси иртнĕ хыççăнхи вăхăт хушшинче, хăшпĕр районсемсĕр пуçне, сахал улшăнусем пулнă-ха. Финанс планне тултарса çитермелли уйăхлăх пуçланнă хыççăн та хăшпĕр районсем тивĕçлипе ĕçлеме тытăнман. Çапла вара финанс планне тултарасси халĕ те çителĕксĕр хăвăртлăхсемпе пырать.

1944 çулхи финанс планне пĕтĕмпех тата вăхăтра тултарса çитермелле тăвас тесен, чи малтан, укçа-тенкĕ пухас ĕç çине ответсăр пăхассине пĕтерни, партипе совет организацийĕсем финанс органĕсене тимлĕн пулăшни кирлĕ. Финанс работникĕсене пĕтĕмпех укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе ĕçлеме мобилизацилемелле, районсенчи, ялсенчи актива çак ĕçе анлăн явăçтармалла, халăх хушшинче массăллă ĕçе вăйлатмалла. Вăхăт кĕтмест. Финанс планне тултарса çитермелли уйăхлăх вĕçлениччен нумай юлмарĕ. Çавăнпа та çав ĕçсене вăраха ямасăрах пурнăçа кĕртмелле. Пирĕн финанс планне пурнăçа кĕртме пур условисем те пур, тимлĕн ĕçлени çеç кирлĕ.

**И. ЗОЛОТНИКОВ,**
**Чăваш АССР Финанс Халăх Комиссарĕ.**

Полковник И. КОРОТКОВ.

# Мускав патĕнчи аслă çапăçу

[illegible]

туплени тума шут тытнă, çав ĕçе тума вĕсем питĕ пысăк вăй пухса тăратнă. Фашистла командовани шутланă тăрăх, Совет Союзĕн столицине тытса илнĕ хыççăн Совет Союзĕ парăнмаллах пулнă, вара хĕвелтухăçĕнчи вăрçă та пĕтмелле пулнă.

Гитлеровецсем хăйсен шухăшĕ ăнăçлăн пурнăçа кĕрессине мĕн тери хытă шанни Гитлерăн Хĕвелтухăç фронтĕнчи çарсене 1941 çулхи октябрĕн 2-мĕшĕнче панă приказĕнчен курăнать. Çав приказра çапла каланă: «Темиçе эрне хушшинче промышленноçлă виçĕ тĕп район пĕтĕмпех пирĕн алла кĕрĕç. Совет Союзне юлашки хут питĕ вăйлă пырса çапма кирлĕ условисем туса хунă ĕнтĕ. Çапла пырса çапни тăшмана çак хĕле кĕричченех пĕтерсе тăкмалла».

1941 çулхи октябрĕн 2-мĕшĕнче Германин 30—35 дивизийĕ Мускав çине наступлени тума пуçланă. 450 километра яхăн тăршшĕ фронтра калама çук вăйлă çапăçусем пуçланса кайнă. Совет çарĕсем тăшман çав тери хаяррăн хĕснине çирĕппĕн кĕтсе илнĕ. Çапăçу чи малтанах питĕ çивĕчленсе кайнă.

Фашистла дивизисен наступленине хирĕç совет çарĕсем вăйлă çапăçнă. Совет çарĕсем питĕ сарлака тăрăхра оборонăра тăнă, вĕсем тăшманăн танксем нумайăшне шута илнĕ. Мускав патне пымалли инçетри тата çывăхри вырăнсенче темиçе оборона тăрăхĕ туса хунă. Çав оборона тăрăхĕсене тăвас ĕçе Мускав хулипе Мускав облаçĕнчи темиçе вунă пин ĕçсынни хутшăннă. Столицăри ĕçсыннисем çав рубежсене тунă çĕрте питĕ нумай ĕçленĕ.

Оборона рубежĕсемпе усă курса, пирĕн çарсем тăшмана халтан ярса пынă, ăна çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен пысăк çухатусем тÿстернĕ. Çак ĕçре Хĕрлĕ Çарăн пур йышши артиллерийĕ те калама çук пысăк вырăн йышăннă. Вăл, тĕл персе, тăшманăн питĕ нумай танкне юрăхсăра кăларнă. Темĕн пысăкĕш çухатусем тÿссе, нимĕçсем темиçе вунă километр малалла кайнă та Мускав патне пымалли инçетри вырăнсене тухнă. Анчах та тăшмана ноябрь уйăхĕн пуçламĕшĕнче Можайск укрепленийĕсен

[illegible]

Атăл патне çитиччченех çĕмĕрсе кайма шутланă. Хĕвелтухăçĕнче çăмăллăн çĕнтерме хăнăхнă тискер кайăкăн планĕ çавăн пек пулнă ĕнтĕ. Ун хыççăн пулса иртнĕ ĕçсем çав план Совет Союзĕнчи условисенче авантюристла план пулнине лайăх кăтартса панă.

Ноябрĕн 16-мĕшĕнче нимĕçсен Мускава хирĕç тунă иккĕмĕш генеральнăй наступленийĕ пуçланса кайнă. Мускав фрончĕн çурçĕрти тата кăнтăрти флангĕсенче пĕр вăхăтрах хаяр çапăçусем пуçланса кайнă. Çапăçу 20 кун хушши пынă. Темĕн пысăкĕш çухатусем тÿснине пăхмасăрах, нимĕçсем малалла кайма тапаланнă. Хăшпĕр тĕлте вĕсем Мускав патне пымалли çывăхри вырăнсене те çитнĕ. Гитлер командованине хăйĕн тĕллевне пурнăçа кĕртесси çывăх пек туйăнса тăнă. Германин информаци бюровĕ ун чухне мухтанса çапла каланă: «Большевиксен столици патне çав тери нумай çывхарнă ĕнтĕ, халĕ ĕнтĕ, лайăх бинокльпе пăхсан, Мускав хулин шалти пайне те курма пулать», тенĕ. Тĕрĕссипе илсен, нимĕçсене вăл вăхăтра Мускаври хваттерсенче пурăнса хĕл каçасси мар, вĕсене Хĕрлĕ Çар аркатмаллах пырса çапасси кĕтсе тăнă. Совет Союзĕн Мускав патĕнчи фрончĕ тăшмана çавăн пек пырса çапма вăйсем пухса тăнă.

Хăйсен столицишĕн кĕрешекен совет çарĕсен çывăхри тылĕнче калама çук пысăк вăй пухăнса пынă. Чугун çулсемпе çынсем, тупăсем, боеприпассем пĕр чарăнмасăр иле-иле пынă. Мускав хăй те питĕ пысăк мастерской пулса тăнă, унта фронта кирлĕ вăрçă хатĕрĕсене пурне те туса тăнă.

Хамăр Тăван çĕршывшăн йывăр кунсенче оборонăра тăрса çапăçса, Хĕрлĕ Çар чаçĕсем нихçан пулман паттăрлăх кăтартнă. Кунта 28 гвардеец-панфиловецсен чаплă ĕçне асăнсан та ситет, çав гвардеецсем фашистсен танкĕсене хăйсен ÿчĕпе пÿлсе лартнă. е тата Зоя Космодемьянская комсомолкăн асаплă вилĕмне аса илме юрать. Çак чаплă ĕçсем вĕсем совет халăхĕ ылханлă тăшмана хирĕç çав тери пысăк пат-

[illegible]

вилсе пĕтнĕ. Çав вăхăт хушшинче пирĕн çарсем 4.801 тупă, 3.071 миномет, 8.000 пулемета яхăн, 90.000 винтовка ытла, 2.766 танк, 33.640 автомашина тытса илнĕ. Нимĕçсен 1.100 самолетне ытла пĕтерсе тăкнă. Декабрĕн иккĕмĕш çуррринчен пуçласа пирĕн контрнаступлени пĕтĕм фрончĕпех тăвакан наступлени пулса кайнă, вăл вара фашистла нимĕç çарĕсене аркатса тăкнипе вĕçленнĕ.

Мускав патĕнче историллĕ вăйлă çапăçнин результачĕсем политикăпа вăрçă тĕлĕшĕнчен калама çук паха пулнă. Çав çĕнтерÿ вăл стратеги пуçарулăхĕ Хĕрлĕ Çар аллине куçассин пуçламăшĕ пулнă. Çав çапăçăвăн ăнăçăвĕ «тĕлĕнмелле ĕçе» пула мар пулнă (ют çĕршывсенчи хăшпĕр хаçатсем çавăн пек çырнă), яланхи факторсене пула, тыл тĕреклĕхне, Хĕрлĕ Çарăн шухăш-кăмăлĕсем çирĕппине, дивизисен хисепĕпе пахалăхне, çарăн хĕçпăшалĕсене, начальство составĕн организаторла пултарулăхне пула пулнă. Çав яланхи факторсем ĕнтĕ çапăçу мĕнпе пĕтессине татса панă. Мускав патĕнчи çапăçу Хĕрлĕ Çарăн ун хыççăнхи ăнăçĕвĕсем валли — Сталинградшăн ăнăçлăн çапăçма, 1942—1943 çулхи хĕлле калама çук вăйлăн та ăнăçлăн çапăçма — меллĕ условисем туса панă, совет çарĕсем 1944 çула çав çĕнтерÿсемпе паллă тунă.

Мускав патĕнчи аслă çĕнтерÿ вăл большевиксен партийĕ калама çук пысăк организаторла ĕç тунипе пурнăçа кĕнĕ. Большевиксен партийĕ совет çыннисен мĕнпур вăйне пĕрлештерме тата вĕсене пĕр тĕллеве пурнăçа кĕртес ĕçе—тăшмана аркатса тăкас ĕçе—яма пултарнă. Çав çĕнтерĕве ăна Сталин аслă ертсе пынипе тата Хĕрлĕ Çар воинĕсен калама çук пысăк кăсталăхĕпе мастерлĕхне пула тунă.

Хĕрлĕ Çар Мускав патĕнче çĕнтерни Европăри халăхсене, гитлеровецсем чуралантарнăскерсене, пусмăрлăхран тухма шанчăк панă. Вăл демократиллĕ çĕршывсене унччченхинчен хытăрах пĕтĕçтернĕ, фашистла Германие хирĕç пыракан кĕрешÿре ирĕклĕхе юратакан çĕршывсен боевой туслăхне çирĕплетнĕ.

## Ача амăшĕ-геройня

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Указĕ тăрăх, Çĕрпÿ районĕнчи Таткăнаш ялсоветĕнчи «Сталинцы» колхоз колхозницине Евдокия Ефимовна Ефимовăна «Ача амăшĕ-геройня» ятне парса, «Ача амăшĕ-геройня» орденне тата СССР Верховнăй Совет Президиумĕн грамотине памалла тунă.

Çĕршыв 58 çулхи чăваш колхозницине, Тăван çĕршыва пилĕк хĕр тата пилĕк ывăл ÿстерсе панăскерне, пысăк награда парса паллă турĕ. Евдокия Ефимовна 25 çул хушши тăрăшнине пĕтĕм халăх ырласа мухтать.

Евдокия Ефимовна ача амăшĕн савăнăçне 1910-мĕш çулта, Ирина çуралсан курнă. Халĕ Ирина Александровна — учительница. Çамрăк ăрăва воспитани парас тĕлĕшпе хастарлăн ĕçленĕшĕн ăна Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăланă. 1912 çулта çуралнă Георгий те вăрçăччен учитель пулса ĕçленĕ, халĕ вăл фронтра çапăçать. Вăл та правительство наградине илнĕ. 30 çулхи Христофор Именевăри вăтам шкулта вĕрентет, 28 çулхи Екатерина çичĕ çул вĕренмелли шкулăн директорĕ пулса ĕçлет, 1919 çулта çуралнă Петр — Отечественнăй вăрçă фронтĕнче. 1922 çулта çуралнă Марйе те — халăха çутта кăларас ĕçре, вăл Таткăнашри пуçламĕш шкулта учительница пулса ĕçлет, 1924 çулта çуралнă Елена тата 1925 çулта çуралнă Михаил Хусанта вĕренеççĕ. Елена — медицина институтĕнче, Михаил — авиаци институтĕнче. Евдокия Ефимовнăн çамрăк ачисем — 15 çулхи Ваня тата 12 çулхи Нина — шкула вĕренме çÿреççĕ.

Евдокия Ефимовна хăйĕн ывăл-хĕрĕсене пурне те çĕршывшăн усăллă пулма вĕрентсе ÿстернĕ. Нумай чухне çывăрмасăр ĕçлесе, вăл 10 ача пăхса çитĕнтернĕ. Большевиксен партийĕ тата совет влаçĕ пирĕн çĕршывра çамрăк ăрăва пăхса çитĕнтерме лайăх условисем туса панă. Çав условисене пула ĕнтĕ Евдокия Ефимовна хăйĕн ача амăшĕн ĕмĕтне чыслăн пурнăçа кĕртме —ачасене хут вĕрентме пултарнă. Халĕ ĕнтĕ унăн ывăл хĕрĕсенчен тăваттăшĕ — учительсем, иккĕшĕ—студентсем, иккĕшĕ—Хĕрлĕ Çар воинĕ тата иккĕшĕ пурнăç çулĕ çине тухма хатĕрленеççĕ. Сталинла Конституци хĕвелĕ айĕнче кăна колхозница çавăн пек вунă ача пăхса ÿстерме пултарнă.

Евдокия Ефимовна çирĕп-ха. Вăл колхозра ывăнма пĕлмесĕр ĕçлет, фронта ĕçпе пулăшма тăрăшать. Сăнран пăхсан, ăна никам та 58 çула çитнĕ тесе калама пултараймасть. Вăл яланах савăнăçлă. Кăçал вăл уйхир бригадинче ĕçлесе 203 ĕçкунĕ тунă. Ача амăшĕ-геройня хăйĕн ывăл-хĕрĕсене ĕçе юратма вĕрентет.

«Ача амăшĕ-геройня» ятне пани çинчен пĕлтерни Евдокия Ефимовнăна çĕнĕ вăй-хăват парать. Çĕрпÿрен пĕлтернĕ тăрăх, çав савăнăçлă хыпара «Сталинцы» колхозра тулли кăмăлпа хавасланса кĕтсе илнĕ. Вăл хыпар мĕнпур колхозниксемпе кокозницăсемшĕн савăнăç кунĕ. Паян ял çыннисем пирĕн республикăри пĕрремĕш ача амăшне-геройньăна Евдокия Ефимовнăча саламласа тав тăваççĕ.

Пирĕн çĕршыв ача амăшĕн хĕрÿллĕ чĕрине чыслаça мухтать. Пирĕн большевиксен партийĕ тата Сталин юлташ ача амăшĕн пурнăçне сыхласа упраççĕ. Ача амăшне-геройньăна мухтаса, эпир хамăрăн большевиксен партине, Сталинла Конституцие, çав Конституцие тăвакан хамăрăн çулă аттемĕре, учителĕмĕре Иосиф Виссарионович Сталина мухтаса чыслатпăр!

## Çĕршыв валли вутă çителĕклĕ хатĕрлесе парар!

Эпир, Çĕрпÿ районĕнчи Тутарла Кăнаш ялсоветĕнчи «Сталинцы» колхоз членĕсем, Сталин юлташăн Октябрьти революци 27 çул тултарни çинчен тунă доклачĕпе приказне пухура сÿтсе-явнă хыççăн, хамăр çĕршыва çителĕклĕ вутă хатĕрлесе парас тесе, социализмлă ăмăртăва тухрăмăр, хамăр çине çакăн пек обязательствăсем илет-пĕр

1) Вăрман хатĕрлемелли çулталăкри планне декабрĕн 5-мĕшĕ тĕлне, турттармалли планне декабрĕн 15-мĕшĕ тĕлне тултаратпăр.

2) çакна пурнăçлама вăрман ĕçне маççăлăн каятпăр: каснă çĕре планпа 3 çын каяс вырăнне 30 çын, турттарнă çĕре 2 лаша вырăнне 6 лаша яратпăр.

Вăрман хатĕрлес ĕçре пирĕнпе ăмăртма Йĕпреç вăрманпромхозĕнче ĕçлекен Çĕрпÿ, Шупашкар, Йĕпреç районĕсенчи пур колхозсене те чĕнетпĕр.

Колхоз председателĕ ЗАХАРОВ.

## Укçапа япаласен 4-мĕш лотерейин билечĕсене ăнăçлăн сарнă районсене премисем панă

Чăваш АССР Совнаркомĕ укçапа япаласен 4-мĕш лотерейин билечĕсене ялсенче ăнăçлăн сарнăшăн тата билет укçине çийĕнчех пухнăшăн Сĕнтĕрвăрри, Çĕрпÿ, Муркаш райсовет исполкомĕсене кашнине актива премилеме 7.000-шер тенкĕ укçа парса премиленĕ.

## ФИЗКУЛЬТУРНИКСЕН ХУЛАРИ ПУХĂВĔ

Çак кунсенче Шупашкарта физкультурниксен пухăвĕ пулса иртрĕ. Пуху Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи физкультурăпа спорт комитечĕн председателĕ Васильев юлташ çуллахи спорт сезонĕн итогĕсемпе хĕллехи тапхăрта тумалли ĕçсем çинчен тунă доклада сÿтсе-яврĕ.

Хĕрлĕ Çарăн пулас воинĕсене çирĕп сывлăхлă та хăюллă çамрăксем туса ÿстерес тĕлĕшпе физкультурăпа спорт обществисем сахал мар ĕçлерĕç. Кăçалхи вунă уйăх хушшинче ал вĕççĕн тытăçса çапăçма — 1651 çын, ывра лайăх ишме — 764 çын вĕрентсе хатĕрленĕ. Çамрăксем хушшинче оборона значокĕсен нормисене парассине лайăх йĕркеленĕ. Çак вăхăт хушшинче ГТО значокĕсен нормисене 715 çын, БГТО нормисене — 365 çын панă. Хулара çăмăл атлетикăпа тата кимĕпе лайăх ишес тĕлĕшпе ăмăртусем туса иртернĕ.

Çав вăхăтрах Шупашкар хулинчи физкультурăпа спорт комитечĕн ĕçĕнче çитменлĕхсем те сахал мар. Физкультурăпа спортăн хăшпĕр коллективĕсенче шкул ачисемпе çамрăксем хушшинчи ĕçе çителĕксĕр туса пыраççĕ, тĕрлĕ ăмăртусене хутшăнмаççĕ, оборона значокĕсен нормисене парассине йĕркелемеççĕ. Шкулсем çумĕнчи физкультура коллективĕсем пĕр-пĕринпе тĕл пулмасăр, ăмăртусем иртерни çук, секцисем организацилемен.

Кăçалхи хĕлле физкультурăпа спорт ĕçне иртнĕ çулхисенчен нумай лайăхлатмалла. Ку тĕлĕшпе кашни заводпа предприяти тата шкулсемпе учрежденисем çумĕнче физкультурăпа спорт коллективĕсене организацилемелле. Хĕллехи тапхăрта çамрăксене йĕлтĕрпе çÿреме 20 тата 30 çехетлĕ программăсем тăрăх вĕрентсе кăлармалла. Çав майпа йĕлтĕр базисене юсаса йĕркелемелле, йĕлтĕрпе çÿреме вĕренекенсене пулăшма квалификациллĕ инструкторсемпе тренерсене тупса памалла.

## Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, декабрĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ декабрĕн 4-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă.

Венло хулинчен хĕвеланăçнерехре (Голландире) союзниксен çарĕсем нимĕçсен Маас шывĕ хĕрринчи укреплениие пĕтерсе тăкас тĕлĕшпе пысăк çитĕнÿсем тунă, çав района тăшмантан пĕтĕмĕшпе тенĕ пекех тасатнă.

Рур улăхĕнче союзниксен çарĕсем тăшманăн Линдерн районĕнче тунă контратакине сирсе янă та Рурдорфпа Флоссдорф ятлă пунктсене тытса илнĕ. Юлих хулинчен кăнтăртарахра союзниксен чаçĕсем Инден патĕнче Инде шывĕ урлă каçнă та çав хулан хĕвелтухăç пайне тăшмантан тасатнă тата Лухерберг хулине тытса илнĕ.

Союзниксен Лангервее хулинчен çурçĕртерехре наступлени туса пыракан çарĕсем Лухен хулине тытса илнĕ те Аахен хулипе Кельн хули хушшинчи автострада патне пырса тухнă. Гюртген хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре союзниксен чаçĕсем Бранденберг хулине йышăннă. Саар улăхĕнче союзниксен çарĕсем Саарлаутерн патĕнче Саар шывĕ урлă каçса кайнă. Унтан кăнтăртарахра союзниксен чаçĕсем Вильгельмсборнн хули патне çитнĕ, çав хуларан 2 миля кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре Германи чикки урлă каçса кайнă. Саарунион хулине тăшмантан тасатнă. Унтан хĕвелтухăçнерехре союзниксен çарĕсем, 2 миля малалла кайса, темиçе ял тытса илнĕ. Çав районран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре союзниксен чаçĕсем Хагенау хулипе юнашар ларакан ялсем патне çитнĕ.

Тури Вогез тăвĕсен кăнтăр пайĕнче хаяррăн çапăçнă хыççăн союзниксем Тюр шывĕн анатри тăрăхĕнчи çÿллĕ вырăна тытса илнĕ.

ЛОНДОН, декабрĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ декабрĕн 5-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă:

Голландире союзниксен çарĕсем Маас шывĕнчен хĕвеланăçнерехри района тăшмантан пĕтĕмĕшпех тасатса пĕтернĕ.

Рур шывĕн хĕвеланăç хĕрринче союзниксен çарĕсем Юлих хули тулашĕнче тăшман хытă хирĕç тăнине çĕнтерсе пыраççĕ.

Саар шывĕн улăхĕнче союзниксем çав шывăн хĕвеланăç хĕррине Мерциг хули районĕнчен пуçласа хăйсен аллинче тытса тăраççĕ. Саарлаутерн хули районĕнче Саар шывĕ урлă каçакан союзниксен çарĕсене нимĕçсем хытă хирĕç тăраççĕ. Унтан кăнтăртарахра союзниксен çарĕсем Тединген тата Диблинген хулисем патне çитнĕ, Пюттлинген хули витĕр тухса кайнă.

Анатри Вогез тăвĕсен районĕнче çурçĕрелле куçса пыракан союзниксен çарĕсем темиçе яла ирĕке кăларнă. Çавăн пекех Эльзас тÿремĕнче те союзниксем майĕпен малалла куçса пыраççĕ. Селеста хулинче виççĕмĕш кун çапăçусем пыраççĕ. Вогез тăвĕсен кăнтăрти пайĕнче союзниксен чаçĕсем малалла куçса пыраççĕ.

Декабрĕн 4-мĕшĕнче кăнтăрла иртсен, союзниксен йывăр бомбардировщикĕсем, истребительсем хÿтĕлесе пынипе, Рур районĕнчи чугун çулсене тапаннă. Оберхаузен хулине пуринчен те вăйлăрах тапаннă. Декабрĕн 5-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле йывăр бомбардировщиксен питех те пысăк соединенийĕсем нимĕçсен Карлсруэ тата Гейльбронн хулисенчи чугун çулсемпе промышленность центрĕсене тапаннă.

ЛОНДОН, декабрĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ декабрĕн 5-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă: Итали фронтĕнче Монтоне шывĕпе Ламоне шывĕ хушшинче 8-мĕш арми чаçĕсем Скала-Виа-Купа каналĕ çинче тăшмана тапăнма укреплени тунă, тăшман вăйлăн хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкнă, унтан хăвăрт малалла кайса, Годо пункчĕ патĕнче Болонья хулипе Равенна хули хушшинчи чугун çула татнă. Фаэнца хулипе Равенна хули хушшинчи çурма çул çинче выртакан Русси хулине тăшмантан туртса илнĕ. Ку хуларан кăнтăртарахра тăшман хирĕç тăни пачах пĕтсе ларнă.

5-мĕш армири Инди чаçĕсем çÿллĕ вырăнсем нумай туртса илнĕ. Фаэнца хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре ларакан Казола-Вальзенио хулине йышăннă. Ку хула Кастель-Болоньез хулине каякан çул çинче ларать.

Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс авиацийĕ 1.300 вĕçеве яхăн тунă.

ЛОНДОН, декабрĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ декабрĕн 6-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă:

Тăшман вăйлă хирĕç тăнине çĕнтерсе пырса, союзниксем Гюртген хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре ларакан Бергштейн хулине тытса илнĕ. Саар шывĕн улăхĕнче союзниксем тата тепĕр тĕлте Саар шывĕ урлă каçса кайнă.

Союзниксен çарĕсен бронетанковăй отрячĕсем Сааргемюнд хулинчен хĕвеланăçнерехре ларакан Хундинген хули патне çитнĕ. Союзниксен ытти чаçĕсем Буствейлер хулине йышăннă. Саарунион хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре союзниксен çарĕсем Эрмингенпа Делинген хулисен хĕррине çитнĕ.

Хагенау хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре союзниксен çарĕсем Мерцвейлер хулине кĕрсе кайнă. Страсбург хулинчен хĕвеланăçнерехри Мутциг хулинчи пĕр фортра пĕр эрне хушши тытăнса тăнă тăшман гарнизонĕ халĕ парăннă.

Вогез тăвĕсен тури пайĕнче союзниксем темиçе миля малалла кайнă. Гонек тата Коль де ла Шлюхт ятлă çÿллĕ вырăнсене тăшмантан тасатнă.

Союзниксен авиацийĕ Германири чугун çул объекчĕсене, çарсем пухăнса тăнă вырăнсене тата çар завочĕсене темиçе хутчен те хаяррăн пыра-пыра тапăннă.

ЛОНДОН, декабрĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ декабрĕн 6-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă: Италире Монтоне шывĕпе Ламоне шывĕ хушшинчи районра наступлени туса пыракан 8-мĕш арми чаçĕсем Равенна ятлă паха хулана тытса илнĕ. Фаэнца хулинчен кăнтăртарахра союзниксен çарĕсем, тăшман вăйлă хирĕç тăнине сирсе ярса, анлă хронтпа Ламоне шывĕ урлă каçса кайнă та унта пысăк укреплени туса хунă. 5-мĕш армири Англи чаçĕсем Монте Пензола ятлă çÿллĕ вырăна туртса илнĕ, çав вырăн вăл Имола хулине каякан çула пÿлсе тăрать.

### СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔ ГЕРМАНИЕ ТАПАННИ

ЛОНДОН, декабрĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Англин информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, декабрĕн 4-мĕшĕнче американецсен 1.200 бомбардировщикне яхăн Касель, Майнц, Гисен, Зост, Бебр тата Хĕвеланăç Германири ытти хуласенчи чугун çулсене, сортировка станцийĕсене тата промышленность объекчĕсене тапаннă. Йывăр бомбардировщиксене американецсен пĕр пине яхăн истребителĕсем хÿтĕлесе пынă.

ЛОНДОН, декабрĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонра официальнăй йĕркепе çапла пĕлтернĕ: декабрĕн 5-мĕшĕнче 550 ытла «Вĕçекен крепость», «Мустанг» йышши 800 истребитель ытла хÿтĕлесе пынипе, Берлинри промышленность объекчĕсене тата Мюнстер хулинчи сортировка станцине тапăннă. Берлин тулашĕнчи боеприпассем тăвакан пысăк завода тата танксем тăвакан завода хытă тапăннă.

### СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔ АВСТРИЕ ТАПАННИ

ЛОНДОН, декабрĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх Италири аэродромсенчи йывăр бомбардировщиксем декабрĕн 3-мĕшĕнче тăшманăн Австрири вăрçă объекчĕсене тапăннă. Бомбăсене приборсем кăтартнă тăрăх пăрахнă. «Вĕçекен крепость» йышши бомбардировщиксен пĕр соединенийĕ тăшманăн Вена районĕнчи объекчĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Тăшманăн авиацийĕпе зенитнăй артиллерийĕ вăйлă хирĕç тăман.

## Грецири лару-тăру

ЛОНДОН, декабрĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио пĕлтернĕ тăрăх, Греци правительстви Афинăра ĕнер демонстрацисем пулнă пирки Афинăпа Пирей хулисенче вăрçăри пек йĕркесем туса хунă.

Лондонри радио корреспонденчĕ Никсон Афинăран çапла пĕлтерет: халĕ хулара электричество çути çукпа пĕрех, телефон çыхăнăвĕ те пĕтсе ларнăпа пĕрех. Паян ирхине пăшалсемпе перкелешнĕ, çав вăхăтра пĕр полицейские тата пĕр демонстранта вĕлернĕ.

ЛОНДОН, декабрĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Афинăран пĕлтернĕ тăрăх ЭАМ («Халăхăн ирĕклĕх фрончĕ» ятлă организаци) штабĕ ĕнер кăнтăрла çапла пĕлтернĕ: демонстрантсене пăшалпа пенĕ вăхăтра 15 çынна вĕлернĕ, 108 çынна амантнă, ирхине Афинăра тăватă тĕлте вăйлă тытăçу пулса иртнĕ, тенĕ.

Афины урамĕсенче Англи танкĕсем патрульлесе çÿреççĕ, вĕсем Греци полицийĕн çуртне хуралласа тăраççĕ, çавăн пекех тата «Виллис» йышши автомобильсем çÿреççĕ, вĕсем çине пулеметсем вырнаçтарса лартнă. Англи çарĕсем тĕп урамсенче тата çар учрежденийĕсен çурчĕсем патĕнче тăраççĕ.

НЬЮ-ЙОРК, декабрĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин корреспонденчĕ Афинăран çапла пĕлтерет: Англи çарĕсем Греци патриочĕсене хĕçпăшалсăрлантарма тата вĕсем хушшинче çынсене арестлеме тытăннă, Афинăри Англи штабĕ Хивы районĕнче Греци патриочĕсене 800 çынна хĕçпăшалсăрлантарни çинчен пĕлтернĕ. Унсăр пуçне Афинăран çурçĕртерехре акăлчансем тата 1200 патриота хĕçпăшалсăрлантарса арестленĕ.

ЛОНДОН, декабрĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио хăйĕн Афинăри корреспонденчĕ пĕлтернине парать. Корреспондент çапла каланă: Афинăра лару-тăру ытларах çивĕчленсе кайрĕ. Паян Британи çарĕсем хулан тĕрлĕ пайĕсенче пыракан çапăçусене хутшăннă. Партизансем столицăн хăшпĕр районĕсене хăйсем контроллесе тăраççĕ. Афинăн хăшпĕр урамĕсенче баррикадăсем тунă.

ЛОНДОН, декабрĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер Афинăри урамсенче кунĕпех тытăçусем пынă. Государство служащийĕсем забастовка тунă. Афинăра пур магазинсене те хупнă. хаçатсем тухман. Корреспондентсем пĕлтернĕ тăрăх, обществăллă çуртсене Англи çарĕсем сыхласа тăраççĕ.

ЛОНДОН, декабрĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Афинăран пĕлтернĕ тăрăх, Греци премьер-министрĕ Папандреу вырăнтан тухнă.

ЛОНДОН, декабрĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Американецсен Англири радиопередатчикĕ пĕлтернĕ тăрăх, Греци премьер-министрĕ Папандреу ĕнер хăй вырăнтан тухасшăн пулни çинчен пĕлтернĕ, анчах та Греци королĕ Георг ăна вырăнтан кăларма килĕшмен. Либералсен лидерĕ Софрулис çапла каланă: манăн парти Папандреу правительствине пулăшмасть, тенĕ.

Америка корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: Грецире Америка çарĕсем çук, американецсем унти ĕçсене хутшăнмаççĕ, тет.

Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, либералсен партийĕн лидерĕ Фемистоклес Софрулис çапла каланă: декабрĕн 4-мĕшĕнче премьер-министр Папандреу мана ваçкаса çĕнĕ правительство тума сĕнчĕ, сулахай партисемпе ытти партисем коалициллĕ правительствăна кĕме килĕшрĕç, терĕ. «Анчах та декабрĕн 5-мĕшĕнче Англи посолĕ мана çапла каларĕ: Англи премьер-министрĕ халь панă инструкцире Греци правительствин пуçлăхне халь улăштарма кирлĕ марри çинчен каланă, терĕ» — тенĕ Софрулис.

Англи çарĕсен командующийĕ Скоби генерал та мана çавăн пекех каларĕ, Папандреуна пулăшма чĕнчĕ, тенĕ Софрулис малалла.

Софрулис ăна хирĕç вара çапла каланă: эпĕ Папандреу правительствине пулăшма килĕшни «диктатурăна пулăшма килĕшни» пулнă пулĕччĕ. Эпĕ апла тума килĕшмес-тĕп, тенĕ.

Октябрĕн 5-мĕшĕнче Скоби генералăн штабĕ çакăн пек пĕлтерÿ пичетлесе кăларнă: полиципе жандармери демонстрантсемпе тытăça-тытăça илнĕ пирки Афины—Пирей районĕнче полици темиçе участокне хăйсен вырăнĕнчен куçарнă. Сылтăмра тăракан çынсемпе сулахайрисем хушшинче те тытăçусем пулса иртнĕ. Юн тăктарас мар тесе, Англи çарĕсен тытăçусене хутшăнма тивнĕ. Пĕр тĕлте сулахайрисем кĕрсе ларнă çурта Англи танкĕсен темиçе хут тупăпа пемелле пулнă. Çав çынсем граждан тĕрмине тапăнчă (вăл тĕрмере тăшманпа çыхăнса ĕçленĕшĕн хупса лартнă çынсем пулнă). Çав тĕрмене жандармерипе пĕрле хуралласа тăнă Англи çарĕсем сухатусем тÿснĕ.

## Совет гражданĕсене Румыни тĕрмисенчен кăларни

БУХАРЕСТ, декабрĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). ТАСС корреспонденчĕ Союзниксен Контроль Комиссийĕн представителĕсемпе пĕрле Бухарест хулинчи Арсенал ятлă çар тĕрмине пырса курнă. Унта хупса лартнă совет гражданĕсене çав кун ирĕке кăларнă.

Тĕрмере ларнă совет гражданĕсем каласа кăтартнă тăрăх, Румыние Союзниксен Контроль Комиссийĕ киличчен вĕсене пурне те тăлăсемпе сăнчăрласа лартнă. Алăсем çинчи тата урасем çинчи тăлăсене пĕр-пĕринпе пысăк сăнчăрпа пĕрлештернĕ. Тĕрмере ларакансем тула усăлма тухма пултарайман, мĕншĕн тесен вĕсен, кĕпейĕмсĕр пусне, нимĕнле тумтир те пулман.

Союзниксен Контроль Комиссийĕ халĕ Румынири тĕрмесене тĕрĕслесе тухать. Перемири çинчен тунă Килĕшÿвĕн 6-мĕш статьи тăрăх, халĕ Румыни тĕрмисенчен 4.000 çынна ытла ирĕке кăларнă.

### ПОЛЬША ХАЛАХĔ ХĂЙĔН ИРĔКЛĔХ КОМИТЕТĔНЧЕН ВĂХĂТЛĂХ ПРАВИТЕЛЬСТВО ТУСА ХУМА ЫЙТАТЬ

ЛЮБЛИН, ноябрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Польшăн нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă хулисенче анлă массăсем Польша Халăхĕн Ирĕклĕх Комитетĕнчен демократиллĕ Польшăн Вăхăтлăх Правительствине туса хума ыйтасси сарăлнăçемĕн сарăлса пырать. «Речь Посполита» ятлă хаçат пĕлтернĕ тăрăх, ноябрĕн 26-мĕшĕнче Варшава—Прага хулинчи халăхăн митингĕнче çакăн пек резолюци йышăннă:

«Эпир, Варшавăра пурăнакан çынсем, митинга пухăнса, Польшăн хальхи лару-тăрăвĕпе паллашнă хыççăн çапла шутлатпăр: Польша Халăхĕн Ирĕклĕх Комитечĕ темиçе уйăх хушшинче ĕçленин результачĕсем çав Комитетран Вăхăтлăх Правительство туса хума вăхăт çитнине кăтартса параççĕ. Çавăнпа эпир, митинга пухăнни çынсем, Польша Халăхĕн Советĕнчен çак ыйтăва хăйĕн çитес ларăвĕнче пăхса тухма ыйтатпăр, Варшава халăхĕн кăмăлне шута илсе (пĕтĕм Польша халăхĕн кăмăлĕ те çавăн пекех пулмалла), Польшăн тата Польша халăхĕн исполнительнăй влаçĕ пулса ĕçлеме вăхăтлăх Правительство туса хума ыйтатпăр»,

Люблин воеводствинчи профессиллĕ союзсен совечĕн ларăвĕнче те çавăн пек резолюциех йышăннă.

Профессиллĕ союзсен совечĕ Люблин воеводствинчи рабочи класăн тата ĕçпе пурăнакан интеллигенци ячĕпе демократиллĕ партисене Польша Халăхĕн Ирĕклĕх Комитетĕнчен Вăхăтлăх Халăх Правительстви туса хума чĕнет, çав Правительство «Польша халăхне нимĕçсен пусмăрĕнчен ирĕке кăларассишĕн пыракан çак вăрçа вĕçне çитерĕ, демократиллĕ çирĕп йĕркене тата ирĕклĕ, вăйлă, никама пăхăнман Польша туса хурĕ.

Люблинри темиçе предприятире тата «Балтик», «Аполло» ятлă кинотеатрсенче Люблинри ĕççыннисен йышлă митингĕсем пулса иртнĕ. Çав митингсенче Польша халăхĕн Ирĕклĕх Комитетĕнчен Вăхăтлăх Халăх Правительстви туса хума ыйтакан резолюцисем йышăннă.

Ĕнер «Рияльторф» ятлă кинотеатрта Польшăн вăрçăри тата политикăллă лару-тăрăвĕпе паллашас шутпа пуху пулса иртнĕ. Пуху йышăннă резолюцире çапла каланă:

Пухури çынсем Польша Халăхĕн Ирĕклĕх Комитечĕ хамăр çĕршывăн никама пăхăнманлăхĕшĕн, демократиллĕ йĕркесем туса хурассишĕн тата хамăр çĕршыва çĕнĕрен ура çине тăратассишĕн кĕрешсе, историллĕ паха ĕçсем тунине палăртаççĕ. Пухури çынсем Польша реакцийĕ тата Польшăн эмиграцири правительстви йăлтах пăнкрута тухнине палăртаççĕ, Польша Халăхĕн Советне Польша Халăхĕн Ирĕклĕх Комитетĕнчен Вăхăтлăх Халăх Правительстви туса хума сĕнеççĕ.

Спирт заводĕнчи, табак фабрикинчи тата ытти предприятисенчи рабочисем те çавăн пек резолюцисемех йышăннă.

### МАЙДАНЕКРА ТИСКЕР ĔÇСЕМ ТУНĂ ГИТЛЕРОВЕЦСЕНЕ ЛЮБЛИНРА ÇАКСА ВĔЛЕРНИ

ЛЮБЛИН, декабрĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Майданекри 5 гитлеровецăн ĕçне пăхса тухнă судăн приговорне пурнăçа кĕртнĕ. Вĕсене суд Майданекри «вилĕм лагерĕнче» тунă тискер ĕçсемшĕн çакса вĕлермелле тунă.

Вĕсене вĕлермелли площаде 20.000 çын ытла пухăннă. Пухăннă çынсем хушшинчен гитлерла пуçкасакансене çиленсе каланă сăмахсем тата «Вĕсене çавă кирлĕ те!», «Тискер ĕçсем тунă фашистсене вилĕм»! тенĕ сасăсем илтĕннĕ. Тискер ĕçсем тунă гитлеровецсене вĕлернине пурте савăнса ырланă.

### Г. Я. РУДЬ—МОЛДАВИ ССР-ĕн ЮТ ÇĔРШЫВ ĔÇĔСЕН ХАЛĂХ КОМИССАРĔ

КИШИНЕВ, декабрĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Молдави ССР-ĕн Верховнăй Совет Президиумĕ Г. Я. Рудь юлташа Молдави ССР-ĕн Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ пулса ĕçлеме лартнă.

### П. И. РОТОМСКИС—ЛИТВА ССР ĕн ЮТ ÇĔРШЫВ ĔÇĔСЕН ХАЛĂХ КОМИССАРĔ

ВИЛЬНЮС, декабрĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Литва ССР-ĕн Верховнăй Совечĕн Президиумĕ П. И. Ротомскиса Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ пулса ĕçлеме лартнă.

### ХРОНИКА

СССР Верховнăй Совет Президиумĕ Николай Михайлович Лифанов юлташа Совет Союзĕн Австралири Чрезвычайнăй тата Полномочнăй Посланникĕ пулса ĕçлеме лартнă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР
декабрĕн 5-мĕшĕнчен пуçласа кунсеренех американецсен саслă, илемлĕ «ПЕСНЯ О РОССИИ» ятлă çĕнĕ фильмне кăтартать.
Сеансĕсем çак вăхăтра пуçланаççĕ: 12, 14, 16, 18, 20, 22 сехетре.
Билетсем малтанах илсе хума пулать. Касса ирхине 10 сехетрех ĕçлеме пуçлать.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместитель секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23.
Типографи № 1, Управлении полиграфпро мышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2, ф. 6. 59×42 п. л. Тираж 16.000 экз.
ЦТ 01-30